ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

Тантăш

6+

43 (4457) №, 2015, октябрь / юпа / , 22
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

Сăвă çырать Катя, Оля, ăмăртуран юлмасть Юля

Тăххăрмĕш класра «5» паллăсемпе çеç вĕренекен Оля Долгова мĕн пĕчĕкрен вулама кăмăллана. Кăштахран паллă писательсемпе поэтсене кура тата чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Зинаида Ивановна Свеклова педагог хавхалантарнăран унра çырас туртăм çуралнă. Лайăхрах ĕçĕсене «Тантăша» ярса панă. Вĕсем хаçат страницисенче кун çути курсан мĕн тери хĕпĕртенĕ Оля! Заметки-сăввине килтисене те вуласа панă.

Çулсем ерипен шунă. Хастар хĕрача час-час редакцие çыру ăсатма тытăннă. 2013 çулхине вара Палтиел çамрăкĕ «Тантăш» хаçат лауреачĕ пулса тăнă. Уншăн пĕрле вĕренекенсем çеç мар, вĕрентекенсем те савăннă. Малашнехи пурнăçра ăнăçу, ўсĕмсем суннă.

– Лауреат ята тивĕçни мана пурнăçра пушшех хавхалантарчĕ, тĕрлĕ ăмăртуконкурса та хаваспах хутшăнма тытăнтăм. Çĕнтерўçĕсен йышĕнче те пĕрре мар пулса куртăм. Республика шайĕнчи «Чĕрĕ сăмах» конкурсра Любовь Мартьянова поэт сăввине илемлĕ вуласа 2-мĕш вырăна тухрăм. Çакă та хăйне евĕр çитĕнў мар-и-ха? Кунта мана Светлана Асамат асăрханă, республикăра иртекен чăваш чĕлхи кунне йыхравларĕ. Шупашкара кайрăм. Çав куна нихăçан та манассăм çук, ĕмĕр асра юлмалли самант пулса юлчĕ маншăн уяв, – тет хастар пике хăпартланса.

Пушă вăхăтра ўкерме, вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме тата çыхма кăмăллать Оля. Кĕçнерникунсерен вара «Тантăш» хаçата чăтăмсăррăн кĕтет.

Виççĕмĕш сыпăкри тăванĕ, пĕр класра вĕренекен Катя Долгова та хастар. Вăл та Оля пекех «Тантăш» лауреачĕ. Ара, хаçат вулама çеç мар, унпа çыхăну тытма та кăмăллать хастар çамрăк. Тем çинчен те çырать пике. Ăнăçлисене редакцие ярса парать.

Тимур ушкăнĕнче пулнăран ватăсене юлташĕсемпе хаваспах пулăшма çўрет.

– Сакăрвуннăран иртнĕ Елена Николаевна кинеми патне тăтăш çўретпĕр. Хĕллесерен урамра ăмăртмалла юр хыратпăр, пўртре урай, кашăк-чашăк çăватпăр, тусан шăлатпăр. Çулласерен вара ĕç нумайланать. Ара, пахча ĕçĕсем те пуçланаççĕ-çке. Ун чухне те пурте туслăн тăрăшатпăр, – тет Катя йăл кулса.

Вуннăмĕшĕнче ăс пухакан Юля Борисова та кирек епле мероприятие хутшăнма кăмăллать.

– Шкул пурнăçĕ питĕ кăсăклă иртет. Кунта пирĕн тĕрлĕ халăх ачи пĕлў илет: чăваш, вырăс, тутар, ирçе... Апла пулин те пĕр килти пек килĕштерсе те ăнланса, пулăшса пурăнатпăр, уроксем епле иртнине те сиссе юлаймастпăр. Хам чăваш. Ытти ачасене кура вĕсен чĕлхине те ăнкаратăп, – тет мал ĕмĕтлĕ те хаваслă Юля.

Элиза ВАЛАНС.

Шăмăршă районĕ,
Палтиел.

➲➲➲ 4-мĕш стр.

ÇЫРĂНТАРУ – 2016
октябрь
15–25

Почтăпа редакцисен пĕрлехи акцийĕ:
ÇЫРĂН ТА — УКÇУНА ПЕРЕКЕТЛЕ

"ХЫПАР" – 570,30 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В4800.
"ХЫПАР" – эрнекун" – 297,84 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В8353.
"ТАНТĂШ" – 244,56 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В4802.
"ТЕТТЕ" – 174,54 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В3208.
"САМАНТ" – 138,60 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В3771.

Ырă тĕслĕх кăтартакансем – Янкăлчра

Раççей Геройĕн Н.Ф. Гаврилов ячĕллĕ Янкăлч шкулĕн вĕренекенĕсем çивĕч ăс-тăнпа, çирĕплĕхпе, анлă тавракурăмĕпе чăнах та тĕлĕнтереççĕ. Ахăртнех вĕсем çакăнта вĕреннĕ ентешĕ Николай Гаврилов пек пуласшăн ăнтăлаççĕ ĕнтĕ.

Хăйсен маттурлăхне хĕрачасемпе арçын ачасем кунсеренех çирĕплетсе çĕнĕ çитĕнӳсем патне туртăнаççĕ. Хастар та кăмăлăскерсем спортра, вĕренӳре, обществăлла ĕçсенче те малта. Мĕн пĕчĕкренех шкул чысне çӳлте тытма хăнăхнăран çитĕнĕвĕсем те курăмлă.

Виççĕмĕш класра вĕренекенсем шкулти кашни мероприятие хутшăнмасăр юлмаççĕ. Сценкăсенче выляма кăмăлланине хаваспах пĕлтерчĕç. Тĕрлĕ роль калăпласси – шăпăрлансемшĕн чăн-чăн савăнăç. Даша Кузьмина, Лена Ильина, Настя Михайлова, Ева Иванова, Виолетта Иванова тата Арина Чернова ташлама та кăмăлларччĕ. Шкулти ташă кружокне çӳресе ăсталăха туптаççĕ. Хăшĕ-пĕри кĕрешӳ секцине те çырăннă.

– Эпĕ юрлама-ташлама питĕ юрататăп! Сăвăсем вулама, вĕсене илемлĕн калама кăмăллатăп. Хам та хăш чухне сăвă шăрçалатăп. Вĕсем ытларах телей, çутçанталăк, çулла пирки. Уйрăмах «Чи лайăх вăрман» ятли кăмăла каять темшĕн, – хăпартланса калаçрĕ Даша.

– Эпĕ те тусăмпа пĕрле юрă-ташă кружокне пĕр сиктермесĕр çӳретĕп! – терĕ Лена тетраде темĕскер çырнă хушăрах.

Класра туслăхпа ырă кăмăллăх хуçаланни куçкĕрет. Çакă вара чи малтан вĕрентекенрен килет. Виççĕмĕшсен класс ертӳçи – Светлана Витальевна Никитина – «Истоки» кружок пуçаруçи те. Унта тишкерекен тĕп темăсем çутçанталăк, тĕн, тĕнче пирки. Кружокри калаçусем кĕçĕннисен кăмăл-сипетне аталантарма пулăшаççĕ.

– Класс туслă пулнишĕн чунтан хĕпĕртетĕп. Эпир яланах вăхăта пĕрле ирттерме тăрăшатпăр, çуралнă кунсене те йышпа пухăнса уявлатпăр. Çакă ачасене пĕр-пĕринпе тата туслăрах пулма, пĕр-пĕрне хаклама хистет тесе шухăшлатăп, – тет учительница вĕренекенĕсене ăшшăн çупăрласа.

– Пирĕн класс ертӳçи – чи ăсли, илемли, ырă кăмăлли! – амăшĕ çумне тĕршĕннĕ пекех «çыпăçаççĕ» Светлана Витальевнăна пĕчĕкскерсем.

Çакăн пек ырă тĕслĕхе кура ăнланатăн: вĕренӳре ӳсĕмсем, çитĕнӳсем тăвасси учительтен те нумай килет. Пĕрин пурнăçĕнче вăл çутă сăнар пек асра юлать, теприн асĕнче вара пачах палăрса юлмасть…

Нина ЦАРЫГИНА.

Канаш районĕ,
Янкăлч шкулĕ.

ЙĂЛТАХ ПĔР САСПАЛЛИРЕН

«К»

Кĕркуннехи кăмăллă кун. Кăнтăрла. Кайăк-хурсем кикак! кăшкăраççĕ, кураксем кар-р! кар-р! краклатаççĕ, кăвакарчăнсем кăвиклетеççĕ. Картишĕнче – качакасем, кăрккасем, кăвакалсем, кроликсем. Кунтах – Кĕтерне кинемейĕн кушакки. Кинемей качаки те кунтахчĕ-ха… Кăштăртатакан кинемей курах кайрĕ…

…Кичĕр-кичĕр качака
Кĕрсе кайнă картана,
Кăшланă купăстана,
Кишĕрпеле кăшмана…

«Камит ку, ками-ит!» – кăшкăрчĕ кунталла каçăхса кулса килекен кӳршĕ, корсетлă кĕрен кĕпеллĕ кăтра Ççени камерине кĕсйинчен кăларнăçем.

«Качча! Качча! Кил, кил кунта! Кичу-у-ук!» – кăшкăрчĕ кинемей качакана. – Ку качакапа кун каçах канăç курмарăм. Кур-ха, каллех кутăнлашать! Ççени, кил-ха, кăлар-ха качакана кунтан!» «Калăн, катастрофа ку… Качака купăстасене кăшланă… Кăларатăп, кинемей, кăларатăп!» – кăшкăрчĕ кинемее Ççени камерине каллех кĕпе кĕсйинчен кăларса. «Ку кулăшла кадрсене кĕçнерникунхи «Киленӳ кĕтесĕ» кăларăмра кăлартаратăпах! Кӳршĕри Кириле – «Капкăн» корреспонденчĕ!» – каласкаларĕ Ççени. Кайран качакана каптăртаттарса кăларчĕ.

Кĕтерне кинемей Ççение килне кĕртсе кăтра кăмпапа, кавăн кукăлĕсемпе, канфетпа, котлетпа кăмăл килтерчĕ. Кинемей кучченеçĕсем Ççение килĕшрĕç.

Качакана кĕртнĕ. Кинемей кăмăллă. Ççени кĕвĕле-кĕвĕле кĕсьери кулăшла кадрсемпе киленсе килнелле кайрĕ.

100ме пуянсем

Юмах/

100 çул каялла 100 çын 100 çырли пуçтарнă. 100 çырли шултăра. 100 çырлине 100пӳ хулинчи пасарта сутнă, çырлашăн 100 тенкĕ панă. Тепĕр 100 кунтан çак çынсем каллех 100 çырли пуçтарнă.

100ле çак 100ме пуянсем патне 100 çырли вăрлама çынсем килнĕ. 100 çын 100 çырлине илсе тухса кайнă, анчах та 100 кунтан çак вăрăсене тытнă, 100 çырлисене 100ме пуянсене тавăрса панă.

Çак 100ме пуянсем халĕ те пурăнаççĕ. 100 çырли те халĕ вĕсен 100 пахча.

Кристина ВАСИЛЬЕВА.

Елчĕк районĕ,
Аслă Таяпа

Вĕренни аван пуянтан.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОРШĂН
Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1233 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4095
Пичете октябрь уйăхĕн 21-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр»

Чăваш Республикин Культтура министерстви, Чăваш Республикикинчи профессионал çыравçăсен пĕрлешĕвĕ тата Чăваш республикинчи ачасемпе çамрăксен библиотеки çамрăк çыравçăсен

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр»

конкурсне йĕркелет.

Конкурс 2015 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 30-мĕшĕччен пырать. Унта 15-30 çултисем хутшăнма пултараççĕ.

Кокурс виçĕ номинаципе иртет:

- Проза
- Поэзи
- Драматурги

Хайлавсем вырăсла та, чăвашла та пулма пултараççĕ. Калăпăшĕ 20 страницăран ытла пулмалла мар. А4 форматпа вырăслине Times New Roman/, чăвашлине Arial Cyr Chuv 12-мĕш шрифтпа пичетлемелле. Текстпа пĕрле хайлавăн электронлă вариантне те ярса памалла /CD-диск е флеш/. Алă вĕççĕн çырнине е литература альманахĕсенче, хайлавсен пуххинче типографи майĕпе пичетленнисене йышăнмаççĕ.

Хатĕр ĕçсене ярса панă чухне хуплашка çине çакна çырса кăтартмалла:

1/ Конкурс ятне:

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» /«Открываем новые имена»/

Çамрăк çыравçăсен конкурсĕ /Конкурс литературного творчества молодых авторов/

2/ Конкурс номинацине

3/ Хайлав е çырнисен пуххин ятне

4/ Автор хушаматне, ятне, ашшĕ ятне

Хуплашкан тепĕр енче /2-мĕш страницăра/ кăтартмалла:

– çыхăну уйрăмĕн индексне, пурăннă вырăн адресне, телефон номерне, e-mail

– вĕренӳ е ĕç вырăнне, ĕçри телефона

– кĕске автобиографи

Хайлавпа пĕрле авторăн тĕрлĕ тĕспе ӳкернĕ сăнӳкерчĕкне /6х8/ ярса памалла.

Ĕçсене 2015 çулхи ноябрь уйăхĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ, регистрацилеççĕ. Декабрь уйăхĕнче конкурс ĕçĕсене хакласа пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. Конкурс пĕтĕмлетĕвне Чăваш респбуликин ачасемпе çамрăксен библиотекин сайчĕ çинче вуласа пĕлме май пулĕ. Унсăр пуçне, «Çамрăксен хаçачĕ», «Тантăш» хаçатсенче тата «Самант», «Тăван Атăл», «Лик» журналсенче пичетлесе кăлараççĕ. Çĕнтерӳçĕсене кашни номинаципе конкурс лауреачĕн дипломне, конкурса хутшăннă çамрăк çыравçăсемпе вĕсен ертӳçисене те Тав çырăвĕсемпе чыслаççĕ. /Дипломсемпе Тав çырăвĕсене электрон почтипе ярса параççĕ/. Чи лайăх хайлавсене «Çамрăксен хаçачĕ», «Тантăш» хаçатсенче тата «Самант», «Тăван Атăл», «Лик» журналсенче пичетлеме палăртнă.

Ĕçсене çак адреспа йышăнаççĕ:

428027, Шупашкар хули, И. Яковлев проспекчĕ, 8а çурт.

Чăваш республикинчи ачасемпе çамрăксен библиотеки,

Таврапĕлӳпе наци литературин уйрăмĕ,

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» конкурса.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем:

/8352/ 51-62-63, 52-37-22, 54-02-82.

Эвелина МАЛЕЕВА,
Чăваш республикин ачасемпе çамрăксен библиотекинчи таврапĕлӳпе наци литературин уйрăмĕн ертӳçи.

ЛИТЕРАТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

"Пурте вулатпăр!" фестиваль

Çут тĕнчере çичĕ тĕлĕнтермĕш теççĕ. Тепĕр тĕлĕнтермĕш те пур, анчах унпа кунсерен тĕл пулатпăр та тĕлĕнтермĕш теме те пăрахрăмăр. Сăмах кĕнеке пирки пырать. Юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен библиотекинче «Чăваш Ен 21 - ПУРТЕ вулатпăр!» республикăри вулав фестивалĕ уçăлчĕ. Уява паллă çыравçăсем, Шупашкарти шкулсенчи вĕрентекенсемпе вĕренекенсем хутшăнчĕç.

Уява йĕркелекенсем чăваш кĕнеке издательствинче пичетленнĕ кĕнекесене пысăк тимлĕх уйăрчĕç. Чăн та, издательствăра тĕрлĕ ӳсĕмри ачасем валли вун-вун кĕнеке кун çути курать. Фестивалĕн тĕп хăнисен – Лев Кадкинпа Андрей Растворцевăн – кăларăмĕсем те кунтах «пиçсе» тухнă.

– Ачасем, кĕнеке кăларас ĕç пĕрре те çăмăл мар, вăл мĕнлерех йĕркеленнине пĕлес килет-и сирĕн? – кăсăкланчĕ мероприятие ертсе пыракан Э.Н. Малеева, Республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекин таврапĕлӳ уйрăмĕн пуçлăхĕ.

– Паллах! – янраса кайрĕ вулав залĕ.

Кун çинчен тĕплĕнрех каласа пама Чăваш кĕнеке издательствинче тăрăшакан ача-пăча литературин редакторне Ольга Федоровăна сăмах пачĕç. Чăваш тата вырăс çыравçисен хайлавĕсем кашни вулакана килĕшчĕр тесен редактор та, корректор та, ӳнерçĕ те вăй хуни çинчен ăнлантарнине куçран пăхса, тимлĕн итлесе ларчĕç шкул ачисем.

– Чăнах та, Чăваш кĕнеке издательствинче вăй хуракансем пирĕн, çыравçăсен, хайлавĕсене кĕнекене калăплана чух чунне парса ĕçлеççĕ, çавăнпа пулĕ кашни кĕнеки ырă, уçса вулама питĕ кăмăллă, - çирĕплетрĕ уява килнĕ Андрей Растворцев çыравçă та. – Чăваш кĕнеке издательствинче эпĕ хайланă Управçă Хуккапа тата унăн тусĕсемпе паллаштаракан юмахсен ярăмĕ тухрĕ. Михаил Николаев художник вĕсене шăп эпĕ курнă пек сăнарлама пултарнă, ку мана питĕ савăнтарать. Тата çакна та палăртса хăварасшăн: эпĕ Амур тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ чылай çул Чăваш енре пурăнатăп. Ачасем валли çырнă кĕнекесем тӳрех икĕ чĕлхепе – чăвашла /куçаруçи – Юрий Сементер/ тата вырăсла – тухни маншăн пысăк чыс-хисеп.

Сăмах май каласан, Андрей Васильевичăн Чăваш кĕнеке издательствинче ачасем валли тăватă кĕнеке пичетленнĕ /«Уйăх çулĕ», 2009; «Кил управçисем», 2012; «Управçă Хуккапа унăн тусĕсем», 2013; «Управçă Хуккапа унăн тусĕсен мыскарисем», 2015/. Çывăх вăхăтра çĕнĕ хайлавсемпе тата савăнтарĕ-ха вăл.

Лев Кадкин та пирĕн авторсенчен пĕри. Унăн та Чăваш кĕнеке издательствинче тăватă кĕнеке пичетленсе тухнă. Вĕсене харăсах вырăсла тата чăвашла хатĕрленĕ.

– Манăн юмахсенчи тĕп сăнарсем - чĕрчунсем, хурт-кăпшанкă. Ку ăнсăртран мар. Эпĕ çутçанталăка сăнама юрататăп.

– Сăвăсем çырнă чух хавхалану ăçтан тупатăр? – интересленчĕ вĕренекенсенчен пĕри.

– Тепĕр чух утса пынă чух сăвă йĕркисем хăйсемех пуçа килеççĕ, эпĕ кĕсьерен часрах хутпа ручка кăларатăп та çырса хуратăп. Унсăрăн киле çитнĕ çĕре манса кайма пулать, - уçса пачĕ вăрттăнлăхне Лев Кириллович.

«Эпир çак уява килнĕшĕн питĕ савăнтăмăр, кĕнекесене юратса вулама, библиотекăна тăтăшрах çӳреме сăмах паратпăр», – терĕç уяв вĕçĕнче ачасем савăк кăмăлпа.

Ольга ФЕДОРОВА.

Вĕрентекен тата вĕренекен

Унăн урокĕсем пурне те килĕшеççĕ

Ольга Владимировна Долгова Палтиел шкулĕнче ĕçлеме пуçланăранпа тăватă çул çитрĕ. Хăйĕн ĕçне чунтан юратаканскер куллен хавас кăмăлпа утать пĕлӳ çуртне.

– Ача-пăча тени – чĕвĕлти кайăк. Вĕсем сана итлесси хăвăнтан килет. Педагог ырă кăмăллă тата ĕçе юратса пурнăçласан нимĕнле йывăрлăх та сиксе тухмĕ. Кунта тĕрлĕ халăх ачи пĕлӳ илет. Эпĕ вара тутар ачисене чăваш чĕлхи вĕрентетĕп. Малтанах йывăртарахчĕ. Халĕ хăнăхнă. Ара, пĕрремĕш класа килекенсенчен чылайăшĕ тутарла çеç калаçать. Çапла хăв тутарла пĕлмесен çĕнĕ темăна епле ăнлантармалла-ха вĕсене? Малтанах тутарла пур сăмаха та ăнкараймастăм, мăшăртан ыйтаттăм. Ара, вăл тутар ачисемпе выляса ӳснĕ те вĕсен чĕлхине аванах тĕшмĕртет. Ĕнтĕ вĕренекенсемпе йывăрлăх курмастăп халĕ. Урокра пурте тăрăшуллă, çĕннине пĕлме ăнтăлаççĕ. Педагог профессине суйласа илнĕрен пĕрре те ӳкĕнместĕп. Çамрăксемпе ĕçлеме питĕ килĕштеретĕп, – тет хастар педагог.

Чăн та, ачасем те ăна иккĕмĕш анне вырăнне хурса хисеплеççĕ, юратаççĕ. Тутар çемйисенче ăшăлăх тупнă Галя Красновăпа Настя Ушкова авă унăн урокне юратса çӳреççĕ, тутарла калаçса сутса яраççĕ.

Галя унччен чăвашла çеç калаçнă пулсан, паян вăл тутарла тап-таса та хитре сăмахлать.

– Манăн паянхи анне тутар хĕрарăмĕ пулсан та, чăвашла мĕн тери илемлĕ пуплет! Ольга Владимировна Долгова педагог пекех, – мăнаçланать Галя йăл кулса.

– Вĕренӳ хăратмасть мана. Çапах тăваттăмĕш чĕрĕк вĕçленнĕ вăхăт, май уйăхĕ, чунтан килĕшет. Ун чухне кашни утăмра çурхи тĕнче вăраннине, çурхи чĕрĕлĕхе туятăн. Сарăхнă çулçăсем витĕр çамрăк курăксем шăтарса тухаççĕ. Çĕр пичĕ шупка симĕс кавирпе витĕнет. Çӳллĕ те ачаш хурăнсемпе ытти йывăççем те симĕсленеççĕ. Хĕвелĕн ăшă пайăркисем кирек ăçта та хуçаланаççĕ. Кунта тавраллах вăрман та, унăн ырă шăрши чуна çĕклентерет. Тăхтавсенче те урама чупса тухатпăр вара çутçанталăк илемĕпе киленме! – хăпартлансах калаçать Настя.

Эрнере çичĕ кун. Çичĕ тăван пек. Ячĕсем те пур: тунтикун, ытларикун, юнкун... Çĕр тĕттĕмĕ сирĕлет те, çутă кун пуçланать. Ĕнер те, виçĕмкун та, паян та çаплах. Кашни килен кун çынна мĕн те пулин парнелет. Çынсем вара ытларах савăнăç кĕтеççĕ. Ольга Владимировна та хăйĕн вĕренекенĕсем вĕренӳре çеç мар, малашнехи пурнăçра çитĕнӳсем тăвасса шанса та ĕненсе пурăнать.

1-мĕш стр.

Пысăк тав, сире, сăнарлă сăмах хуçисем

Шкула хăнасем килсен эпир мĕн тери хĕпĕртенине хамăр çеç пĕлетпĕр. Ара, Шупашкартан ытла аякра пурăннăран пирĕн патăрта час-час хăнасем пулаймаççĕ-çке.

Акă нумаях пулмасть Зоя Сывлăмпипе Нина Пăрчăкан килсе çитрĕç. Эпир вĕсене çăкăр-тăварпа кĕтсе илтĕмĕр, чечек çыххи парнелерĕмĕр. К. В. Иванов поэт çулталăкне халалласа пысăк уяв йĕркелесе ирттертĕмĕр. Акт залĕнче ачасempe вĕрентекенсем йышлăн пухăнчĕç.

Зоя Леонидовнăпа Нина Алексеевна пире тарăн шухăшлă сăввисempe паллаштарчĕç, çыравçă ĕçĕ, пурнăçĕ пирки каласа пачĕç. Ку çеç те мар-ха, Нина Пăрчăкан уçă та янăравлă сассипе халăх юррисене шăрантарчĕ.

«Шăмăршă хыпарĕн» ĕçченĕ Галина Николаевна Иванова та, пĕр кĕнеке авторĕ, хăйĕн сăввисене янăраттарчĕ.

Эпир те, «Çивĕч перо» кружок членĕсем, пултарулăхпа савăнтартăмăр. Аня Стратилатова, Катя Долгова, Юля Юманова тата çак йĕркесен авторĕ, хамăр шăрçаланă сăвăсене вуларăмăр. Таня Долгова вара Константин Ивановăн «Икĕ хĕр» юмахĕпе куракан-итлекене илемлĕн паллаштарчĕ.

«Тантăш» хаçат ĕçченĕ, радио журналисчĕ Галина Вастрюкова пирĕнтен интервью илчĕç. Çав самантра паллах пăлхантăмăр. Çапах та мăнаçлантăмăр та. Ара, хамăр пирки юратнă кăларăмра çырнине вулама тата хамăр сасса радио хумĕпе итлеме мĕн тери аван-çке!

Çыравçăсempe тата корреспондентсempe иртнĕ тĕлпулу ĕмĕр асра юлĕ. Пысăк тав сире, сăнарлă сăмах хуçисем!

Ольга ДОЛГОВА, 9 класс.

Шăмăршă районĕ,
Палтиел.

Вăрман тусĕ – Таня

Çутçанталăка чунтан юратать пиллĕкмĕш класра ăс пухакан Таня Долгова. Вăрмана сăтăр тăвакана сивлет.

– Çуркуннесерен мĕн тери илемлĕ хурăнсене шăтарса пăсакансене ятлас килет. Тепри тата çăка хуппине сӳсен, виççĕмĕшĕ юман касса йăвантарсан, пирĕн вăрмантан мĕн юлать? Çĕр питне мĕн илем кӳрет тетĕр-и? Паллах вăрман! Вĕçен кайăксempe чĕрчунсем ăçта пурăнаççĕ? Вăрманта! Чечексempe çырласем ăçта ӳсеççĕ? Каллех вăрманта! Çутă тĕнчере вăрмантан хакли, вăрмантан илемлĕреххи нимĕн те çук. Ахальтен мар аслăрах çынсем: «Вăрман – пĕтĕм пурнăç илемĕ, пĕтĕм илемлĕх пуххи», – тесе çирĕплетеççĕ. Эпĕ вĕсempe килĕшетĕп. Çавăнпа яланах çутçанталăк илемне шурă хут çине куçарма юрататăп. Ӳкернĕ май хама çав тери канлĕ пулнине те туятăп, – тет вăл час-часах юлташĕсен умĕнче.

Çапла, вĕренӳ отличникĕ аллине кăранташ тытсан темчченех сĕтел хушшинче ларма пултарать. Юратнă предмет вара – математика.

– Эпир Настя Долговăпа кирек епле уравнени, задача хуравĕсене чи малтан шутласа тупаканĕсем. Долгова тенĕрен, ун пек хушаматлисем пирĕн шкулта тем чухлех. Шкула хăнана килекенсем вара, уйрăмах журналистсем: «Сирĕн шкул Долговăсенчен пуян вара. Пурте пĕртăвансем пуль апла?» – теççĕ шӳтлекелесе. Мана сăмахран, хамăн хушамат çав тери килĕшет, – йăл кулса калаçать хастар хĕрача.

Пурне те пĕлме ăнтăлаканскер пушă вăхăтра алла кĕнеке тытать. Уйрăмах ăна юмах-халап кăсăклантарать. Унччен «Тетте» журнала алăран яман пулсан, паян «Тантăшпа» туслă вăл. Хăйĕн сăввисене пĕрре мар редакцие ярса панă Таня.

– Ку тĕлĕшпе анне те пулăшса, хавхалантарса пырать мана. Çитменлĕхсене самантрах палăртать, ăнăçлисемшĕн мухтаса та илет. Вăлах хаçат-журналпа туслаштараканĕ те, – çирĕплетет пиллĕкмĕш класăн хастар вĕренекенĕ.

Паян вăл çав тери пысăк ĕмĕтпе пурăнать. Кун пирки чи çывăх юлташĕпе Софья Стратилатовăпа час-час калаçма юратать. Урамра иккĕшĕ выляна чухне тӳпере вĕçекен кайăксене тинкерсе:

– Эх, манăн та çав çӳл тӳпене çитсе курас килет. Пĕр-пĕр кун парашютпа сикес кăмăл çав тери пысăк. Ку ĕмĕт виççĕмĕш класра çуралчĕ те, паянхи кун та канăç памасть. Ун чухне телевизорпа парашютпа сикекенсем пирки кино кăтартрĕç те... пĕлетĕн-и, мĕн тери çунатлантăм! Çав вăхăтра хастар сăнарсемпе туслашас килчĕ. Курса тăрăн, кăшт вăхăт иртсен хамăн ырă ĕмĕте пурнăçа кĕртетĕпех. Ку таранччен ума лартнă тĕллеврен пăрăнман, малашне те çаплах пулĕ, – тет мăнаçланса.

Луиза ВАСИЛЬЕВА.

Шăмăршă районĕ,
Палтиел.

Ĕçлесе çăкăр çиме ĕмĕтлен.

АСРАН КАЙМИ ШКУЛ ÇУЛЁСЕМ



Чăваш Наци Конгресс Президенчё Николай УГАСЛОВ:

«Артист та, летчик та пулаймарăм...»

Эпё шкула кайичченех пилёк çултах чăваш çырăвён сас паллисене пёлнё, çавăнпа та вёренмелли кёнекери, букварьти сăмахсене аванах сыпăнтарса вулаттăм. Çырма та пултараттăм. Çаксене тума пултарнăранах тата шутлама пёлнине пулах ёнтё хăçан шкула, пёрремёш класа кайăп-ши тесе ялан шухăшласа çýреттём.

Мён пёчёкренех ир тăма хăнăхнă. Картишёнчен выльăх-чёрлёхе хăваласа кăлараттăмччё те кётёве çитиех ăсататтăмччё.

Пёрремёш класа кайнине лайăх астăватăп. Вăл кун ирех тăтăм. Çăвăнса тасалнă хыççăн вёр çёнё резина атă тата çёнё шăлавар тăхăнтăм та пир сумка çакса шкула парта йышăнма вёçтертём. Пирён енре вёренý çулё пуçланиччен шкула кайса парта йышăнас йăла пурччё. Кун пирки аслисем малтанах каласа хунăччё. Манăн малти партăра ларас килнё ёнтё.

Çанталăкё шăрăх. Çуталса тăракан резина атта пула ура тарларё. Шкула çитрём. Никам та çук. Шкул картишён алăкне çăрапах питёрнё. Эпё нумай шухăшласа тăмарăм, карта урла вăр-вар каçма тытăнтăм. Йёркеллех каçаймарăм. Малтан шăлавара пăтаран çаклатса çуртăм, кайран атта шăтартăм. Ăна-кăна пăхмарăм, шкул алăкё патне пёрремёш пырса тăтăм. Ачасем пухăнсан алăкне уçрёç. Эпё класа кёрсе малти ретри парта хушшине лартăм. Ман хыççăн ачасем пурте кёрсе вырнаçрёç. Кёçех учительница кёчё. Вăл хăйёнпе паллаштарнă хыççăн ман пата пычё те: «Коля, эсё ыттисенчен кăшт пысăкрах, хыçалти партăна кайса лар-ха», – терё. Эпё, аслисем каланине итлеме хăнăхнăскер, кăмăлсăр пултăм пулин те учительница тёллесе кăтартнă вырăна уттартăм.

Çак кунран пуçласа пёр сиктермесёр шкула çýреме тытăнтăм.

Эпё пёрремёш класранах лайăх вёренсе пытăм. Пур предмета та юратнă. Чистописани предметне йывăртараххăн алла илеттём. Вараласа çырнăран малтан «3» паллă çаклатни те пулнăччё. Виççё-тăваттăмёш классенчен пуçласа вара «5» паллăсемпе кăна вёреннё. Киле панă ёçсене эпё килте туман. Уншăн анне питё кулянатчё. «Ку ачаран кам пулё-ши?» – тенён туйăнатчё.

Пёррехинче, 4-5-мёш классенче пулас, шкултан килтём те анне сётел хушшинче йёрсе ларнине курах кайрăм. «Мён пулчё вара?» – тесе ыйтрăм. «Шкулта ашшё-амăшён пухăвё пулчё. Сана лайăх вёреннёшён мухтарёç, çавăнпа савăннипе йёретёп», – терё.

Эпё аннене çурăмёнчен лăпкаса лăплантартăм.

Нихăçан та асран тухайми вёрентекен – Александра Федоровна Шихранова. Вăл пуçламăш класс учительници. Чăвашчё. Лăпкă та кăмăллă калаçни чуна çывăхчё. Пуçламăш классенче вулама, çырма тата шутлама хăнăхтарнăран Александра Федоровнăна ырăпа кăна аса илетёп.

Чăваш чёлхине питё юрататтăм. Виççёмёш класра сăвăсем çыраттăм. Вёсене эпё алвёççён кăларакан «Утăм» ятлă кёнекене çыра-çыра хураттăм. Вăтам классенче вёреннё чухне математика, аслă классенче физикăпа химие килёштерме пуçларăм. Вёсене лайăх пёлнёренех районта иртекен предмет олимпиадисене тăтăш хутшăнаттăм. Пёрремёш вырăнсем йышăнни те пулнă.

Тантăшсенчен чи çывăх тус манран пёр çул аслăрах Геннадий Леонидович Яруковчё. Эпё те аттесёр, вăл та ашшёсёр çитёнеттёмёрччё. Манăн атте эпё икё çулта чухне çёре кёчё.

Пёррехинче пирён яла артистсем килчёç. Питё чаплă концерт лартса пачёç. Вёсене курсан манăн артист пулас шухăш çуралчё. Каярах шкулта вёреннё чухне летчик та пулас килчё. Артист та, летчик та пулаймарăм, строитель пултăм.

Ку çапла тейёпёр. Эпё мён пёчёкрен платник ёçне кăмăллаттăм. Сава, пуртă, пăчкă тытма, вёсемпе ёçлеме пёлеттём. 4-5-мёш классенче чухнех платниксемпе пёрле пýрт-çурт тунă çёре хутшăнаттăм. Алăстисем мана каскалама, чутлама пёлнине кура юрататчёç. Час-часах мухтаса та илетчёç.

Пёр çулхине платниксем кýршёре йывăçран çёнё пýрт туса лартрёç. Эпё те вёсемпе пёрле май килнё таран çурт-йёр çавăрас ёçре вăй хутăм. Çурт тăррине тытса тăракан каштана вёсем ытлашши хулăн тунине курсан эпё платниксене: "Ку хулăн струпилтен иккё тума пулать ", – терём. Çапла сёнсе каланă хыççăн вёсем пёр-пёрин çине пăхрёç те темён каласса илчёç. Манăн сăмахсемпе килёшрёç. Чăнах та, хулăн струпила тăршшёпе çурмаран çурса иккё кăларчёç. Платниксем мана, шăпăрлана, итлени ун чухне çав тери савăнтарнăччё.

Тепрехинче кýршёсем сарай туса лартрёç. Эпё, улттăмёш класс вёренсе пётернёскер кăна, вёсен çав çёнё хуралтине кая-кая пăхса хамăр валли вутă сарайё туса лартрăм. Çапах та анне темшён: «Стройка ёçёпе ан аппалан, пулмасть санран», – тетчё. Ку сăмахсене вăл кил-çурт тавраш çёклес, хуралтă лартас ёç йывăр пулнине кура мана хёрхенсе каланă ёнтё.

Ача чухнех манра çурт-йёр ёçне перекетлё майпа тума, çав тёллевпе çёнёлёх кýме пултаракан пултарулăх пуррине эпё çитёнсен питё лайăх ăнланса илтём. Рационализатор текенни ман чунра шкул ачи чухнех пулнă иккен.

Çурт-йёр ёçне килёштернине пулах ёнтё паянхи кун «ТУС» строительство фирмин ертýçинче вăй хуратăп.

Эпё хамăн вёрентекенсемпе паян та мухтанатăп. Манăн чёрере тарăн йёр хăварнăскерсене тавах!

Геронтий НИКИФОРОВ,
Чăваш Республикин тава тивёçлё учителё.

Лицейра – финанс грамотин кунё

«Вёренý заведенийёсенче – финанс грамотин кунё» Пётём Раççейри программăпа килёшýллён Раççей Банкё Атăлçи федераллă округёнчи шкулсенче интерактивлă онлайн-уроксем ирттерчё. Унта Шупашкарти 44-мёш лицейра аслă классенче вёренекенсем те хутшăнчёç.

Онлайн-лекци «Что значит быть финансово грамотным», «Пять простых правил, чтобы не иметь проблем с долгами» тата «Биржа и основы инвестирования» темăсем тавра пулчё.

Раççей Тёп Банк ёçченёсем Чăваш Ен программăна активлă хутшăннине палăртрёç. Пёлтёр Финанс грамоти эрнине халаллана мероприятисем, çавра сётелсемпе семинарсем республикăри 425 вёренý учрежденийёнче иртнё – ку Атăлçи тăрăхёнчи регионсем хушшинчи чи лайăх кăтарту.

Асăннă темăсене пăхса тухнисёр пуçне экспертсем вёренекенсене кăсăклантаракан ыйтусене те хуравларёç. Çамрăксемшён Светлана Анатольевна Иванова ЧР финанс министрён çумё килсе çитни те пёлтерёшлё пулăм шутланчё. Светлана Анатольевна «Мён вăл бюджет? Раççей тата Чăваш Ен бюджет системин тытăмё» темăпа уçă урок ирттерчё.

Мероприяти вёçёнче ачасем чылай çённине пёлнине палăртрёç, специалистсен тулли те тёплё хуравёсем пурне те тивёçтерчёç.

Нина ЦАРЫГИНА.

Вёренни кирек хăçан та кирлё.

ТУЙĂМСЕН ЫТАМĔНЧЕ

Мĕн вăл юрату?..

Мĕн-ши вăл юрату?.. Кам та пулсан çак ыйтăва пĕр иккĕленмесĕр хуравлама пултарать-ши? «Мĕн вăл юрату?» – тесе ыйтатăн та, юлташу тӳрех шухăша путать… Чăннипех те çак ыйтăва хуравлама йывăр-ши? Тен, тупсăмĕ унăн пачах та çук?

…Кĕрхи хитре аллея. Йĕри-тавра – тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем. Пĕрисем илемлĕрен те илемлĕ кавир евĕр ирхи çумăрпа йĕпеннĕ, анчах та кăнтăрлана типсех çитеймен çĕре витнĕ, теприсем майĕпен çаврăна-çаврăна йывăçсем çинчен ӳкеççĕ. Çак асамлă аллейăри кăвак сак çинче Эсĕ ларатăн… Хумханнипе кăшт чĕтрекен сылтăм аллупа хĕрлĕ, сарă çулçăсене çĕртен илетĕн те сак çине хуратăн, унтан тепĕр аллупа çулçăсене çӳлелле тытса уф-ф-ф! тăватăн. Эх, вĕçеççĕ вара, ытарайми хитрескерсем, капăр кĕпе тăхăнса ташлакан пикесем пек çаврăнаççĕ те çаврăнаççĕ! Тĕлĕнсе пăхса тăратăн. Вăхăтран-вăхăта /хăв çавна сисместĕн те/ куçу алă сехечĕ çинче чарăнса тăрать…

…Вăл, Эсĕ кĕтекен çын, хальхинче те Сана кĕттерсе тăмарĕ. Сар тюльпансен черчен çыххине тытнăскер, васкамасăр, утас-ши малалла е каялла çаврăнас тенĕн пычĕ пулин те Сан умна кĕске самантрах çитсе тăчĕ: «Салам!» Эсĕ чĕнместĕн-ха… Те вăйлă хумханнипе, те Вăл ăшă аллипе Санăн темшĕн яланах сивĕ аллуна тытса темĕн каланăн куçран пăхса тăнипе Эсĕ сăмах хушма хăяймастăн.

Темĕнле йывăр шăплăх… Иксĕрĕнтен пĕри те çакăн пек лару-тăрура кирлĕ сăмах тупайманни Сире тата вăйлăрах пăлхантарать.

Мĕншĕн-ха чунра темĕнле йывăрлăх тăрать?.. Мĕншĕн чĕре халь-халь тухса тарасла тапать? «Ах, йĕрес марччĕ…» – тесе шухăшласа тăнă çĕртех майĕпен шуса, йăлтăртатса, çутă йĕрсем хăварса çут кĕмĕл евĕр куççуль анать. Мĕн тăвăн-ха? Уйрăлу самантне çывхартас мар тесе çакăн евĕрлĕ лару-тăрура тем те тăваттăнччĕ те, анчах…

…«Тĕлĕк… Хăрушă тĕлĕк çеç пултăрччĕ ку…» – тесе ерипен куçна хупатăн. Ак, Санăн аллуна такам хăйĕн аллинчен вĕçертет. Чăнах та, йăлтах тĕлĕк пек туйăнать… Тăрук шак! шак! илтĕнсе кайни те пушмак сасси пек мар… Хупă алăка кам та пулин уçасса шанса такам шаккаса тăнă пек темелле-ши?..

Куçна хупатăн… Кĕрхи аллея. Сак. Эсĕ пĕрпĕччен. Телейсĕрскер, нимĕн тума пĕлмесĕр аллуна чăмăртатăн. Сак çине хурса хăварнă тюльпансен çыххине хăв çумна тытса инçете тинкеретĕн… Тен, вăл таврăнĕ?..

Икĕ чун… Пĕр-пĕринсĕр тăрайман чунсем – Эсĕ тата Вăл…

Гитарăпа чуна тыткăнлакан кĕвĕсем калама пултаракан каччăн асне ытти хĕрсенчен пит нимĕнпе те уйрăлса тăман пике мĕнпе кĕрсе юлма пултарнă-ха? Мĕншĕн пĕр-пĕрне чунтан юратакансем хăйсен туйăмĕсене пытараççĕ?

Ку ыйтусене пĕр суймасăр хуравлама пултаракансем иккĕн çеç, анчах та: «Эсĕ кама та пулсан килĕштеретĕн-и?» – тесе ыйтсан вĕсенчен нихăшĕ те: «Çапла», – темест.

Тен, çакă вăл чăн-чăн юрату?..

Кристина ВАСИЛЬЕВА,
ЧППУ студентки.

Пĕр юрă

Çулталăк каялла юратса итленĕ юрăсене çавăрттарма тытăнтăм. Чунра ырă та çав вăхăтрах тунсăхлă пулса кайрĕ. Иртнĕ вăхăт паян тата пылаккăнрах, илĕртӳллĕрех курăнать. Ун чухне кашни кун пĕр евĕрлĕ иртнĕ пекчĕ. Халĕ ăнланатăп, кашни кунăн хăйĕн тĕсĕ пур иккен.

Акă çав юрă янăрать. Унăн пуçламăш çеммине илтсенех чĕре кăлт-кăлт тапма тытăнчĕ. Мĕншĕн тесен çав юрă сана аса илтерет. Эсĕ ман пата пĕрремĕш хут шăнкăравланă чухне эпĕ шăпах çав юрра итлеттĕмччĕ. Тĕл пулма чĕнтĕн. Анчах эпĕ килĕшмерĕм. Чирленĕччĕ-çке. «Эпĕ те чирлерĕм-ха, – терĕн эсĕ. – Ку тĕл пулма чăрмантармасть-çке». Анчах эпĕ шухăша улăштармарăм. Эсĕ темĕнле тархасласан та тĕл пулма килĕшмерĕм. Унччен çĕкленӳллĕ калаçнăскер эсĕ пусăрăнчăк кăмăлна пытараймарăн.

Тĕрĕссипе каласан, чирлени тĕп сăлтав марччĕ кунта. Шикленсе ӳкрĕм çав. Санпа мĕнле калаçасси, хама мĕнле тытасси питĕ шухăшлаттарчĕ… Сана килĕшеймесрен çав тери хăрарăм. Килĕшмеллеччĕ çав…

Халĕ пĕр-пĕринпе СМС-çырусем çӳрететпĕр-ха, сайра-хутра та пулин, анчах шăнкăравласа калаçман. Миçе хутчен курнă-ши эпĕ сана? Иккĕ-виççĕ кăна пуль, ăнсăртран… Анчах сăнару нихăçан та манăçмасть, сассуна та яланах уйăрса илĕп. Санпа çыхăннă кашни самант маншăн ылтăн евĕр хаклă. Манăн шухăшсенче эсĕ – чи лайăх каччă, сан пекки тек çук. Тен, чăн пурнăçра ку апла мар та пуль, çапах…

Сасартăк телефон шăнкăртатрĕ. Ют номер.

– Алло!

– Салам, Алена…

Чĕре хыттăн-хыттăн тапма пуçларĕ. Эсĕ-çке ку! Мĕнле майпа? Манăн шухăшсене илтрĕн-ши? Сассуна çулталăк илтмен пулин те тӳрех палларăм, чунра ăшă-ăшă пулса кайрĕ. Хальхинче тĕл пулма чĕнсен сăмахсăрах килĕшĕп…

Алена ИВАНОВА.

Элĕк районĕ.

ХАЛАП ХАПХА ТĂРРИНЧЕ

Чиперкке

Асамçă пек илемлĕ хĕр çулпа пырать. Сасартăк вăл хăйĕн хыççăн каччă утнине асăрхарĕ. Каялла çаврăнчĕ те: «Кала-ха, мĕншĕн эсĕ ман хыççăн утатăн?» – терĕ. «О, ман чĕрене тыткăнлаканĕ, санăн илĕртӳлĕхӳ мана сан хыççăн утма хистет, – терĕ каччă. – Çынсем эпĕ лютня /авалхи хĕлĕхлĕ музыка инструменчĕ/ калама ăста пулнине палăртаççĕ, поэзи вăрттăнлăхне пĕлнинчен тĕлĕнеççĕ, хĕрсен чĕринче юрату асапне чĕртме пĕлни çинчен калаççĕ. Эсĕ вара манăн чĕрене тыткăна илтĕн, эпĕ сана хамăн туйăмсене уçса парасшăн».

Чиперкке ун çине пĕр вăхăт чĕнмесĕр пăхса тăчĕ, унтан çапла каларĕ: «Мĕнле юратма пултаратăн-ха эсĕ мана? Йăмăкăм манран чылай илемлĕрех тата илĕртӳллĕрех. Ман хыççăнах утать вăл, çаврăнса пăх».

Каччă чарăнчĕ, çаврăнчĕ те килпетсĕр тумланнă шăлсăр карчăка çеç курчĕ. Хĕре хăваласа çитес тесе хыттăнрах утма пуçларĕ. Унтан пуçне çĕклеймесĕр, йăвашшăн чĕнчĕ: «Кала-ха, мĕншĕн санăн чĕлхӳнтен суя сăмах тухрĕ?» Пике йăл кулчĕ те: «Эсĕ, тусăм, юрату çинчен ăнлантарнă чухне хăв та тĕрĕссине каламарăн-ха. Юрату йĕркине пĕтĕмпех пĕлетĕн хăв, çавăнпа мана курсан чĕрӳ çунса тухасла пĕçертнĕ пек выляса кăтартрăн. Урăх хĕр çине пăхма мĕнле çаврăнма пултартăн-ха эсĕ?»

Çынсем мĕншĕн хирĕçеççĕ?

Пĕррехинче Вĕрентекен хăйĕн вĕренекенĕсенчен ыйтать:

– Мĕншĕн çынсем хирĕçнĕ вăхăтра пĕр-пĕрне кăшкăраççĕ?

– Мĕншĕн тесен лăпкăлăха çухатаççĕ, – тет пĕри.

– Анчах мĕншĕн кăшкăрмалла-ха, тепĕр çын санпа юнашарах ларать пулсан? – çаплах ыйтать-ха Вĕрентекен. – Унпа шăппăн сăмахлама пулмасть-ши? Тарăхсан мĕншĕн кăшкăрмалла?

Вĕренекенсем тĕрлĕрен хурав параççĕ, анчах пĕри те Вĕрентекене тивĕçтермест. Юлашкинчен вăл çапла ăнлантарса парать:

– Çынсем пĕр-пĕринпе кăмăлсăр тата хирĕçеççĕ пулсан чĕрисем пĕр-пĕринчен аяккарах тараççĕ. Çак инçĕше хуплас тата пĕр-пĕрне илтес тесен вĕсен кăшкăрма тивет. Мĕн чухлĕ хытăрах тарăхаççĕ, пĕр-пĕринчен çавăн чухлĕ инçерех каяççĕ, вăйлăрах кăшкăраççĕ.

– Çынсем пĕр-пĕрне юратсан вара мĕн пулса иртет? Вĕсем кăшкăрмаççĕ, пачах хирĕçле, шăппăнрах калаçаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсен чĕрисем питĕ çывăх, вĕсен хушши те çав тери пĕчĕк, – малалла тăсать Вĕрентекен. – Калаçмаççĕ те, пăшăлтатаççĕ çеç, çапла майпа юратăвĕ патне тата çывăхрах пулаççĕ. Юлашкинчен вĕсене пăшăлтатни те кирлĕ мар. Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ те мĕн калас тенине сăмахсăрах ăнланаççĕ.

ПОЭЗИ ЫТАМĔНЧЕ

* * *

Чӳречерен салхуллă çумăр пĕрчисем
Эп пурпĕрех уçманнине пĕлсе шаккаççĕ.
Мĕн-ма мана чăрмантараççĕ-ха вĕсем?
Ăш çуннине пĕлсе ак пурпĕр путараççĕ
Пĕр хĕрхенмесĕр мана тунсăх авăрне,
Сив куççуль евĕр, майĕпен шуса анаççĕ,
Пĕр чарăнми шакка-шакка чӳречене,
Сисмесĕрех, кур, çапăнаççĕ, саланаççĕ…

* * *

Хам пурнăçра сан пек çынна эп тĕл пулманччĕ.
Тен, çавăнпа сана пĕрремĕш хут курсан
Лăпкăлăха манса ман чунăм пит хумханчĕ –
Пит килĕшетĕн эс мана, апла пулсан.
Вăтаннипе сана куçран пăхма хăяймăп,
Анчах та ăшшăн эс тытсассăн аллăма
Сан çумăнтан эп пăрăнса утса каяймăп,
Эп пытараймăп пуль телейлĕ куллăма.
Сана тепре курсан ман чун каллех хумханĕ,
Чĕрем те тапĕ вăйлăрах та вăйлăрах,
«Сана курайăп-ши тепре?» – тесе пăлханĕ;
Пĕр шухăш пулĕ пуçăмра: «Çук, ан пăрах,
Пĕр çеккунт çеç ман аллăма тытса тăрсамччĕ,
Эп урăх нимĕн те ыйтмастăп. Куçăмра
Çап-çутă савăнăç, телей çути курсамччĕ –
Ун чух кăна телей çуталĕ пурнăçра…»

Кристина ВАСИЛЬЕВА,
ЧППУ студентки.

Страницăна Лариса ПЕТРОВА (56-11-80) хатĕрленĕ.

Юрату – пурнăç юрри.

Вениамин ТИМАКОВ

Сăмах илемне туйсан...

(сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

(Малалли. Пуçламăшĕ 25-32, 34-41-мĕш номерсенче).

Антитеза. Пĕр-пĕринчен пачах урăхла япаласене е ăнлавсене танлаштарса, çыхăнтарса каланине антитеза теççĕ.

Эсĕ чухăн та,
Эсĕ пуян та,
Эсĕ вăйлă та,
Эсĕ вăйсăр та –
Руç-аннемĕр!

(Н.Некрасов.)

Антитеза калас шухăш-туйăма чылай вăйлатать, витĕмлĕх кӳрет. Халăх сăмахлăхĕнче çакнашкал поэзи синтаксисĕ чылай тĕл пулать. Акă, ун йышши тупмалли юмахсем: «Автанран лутра, лашаран çӳллĕ». (Пĕкĕ.) «Курăкран лутра, вăрмантан вăрăм». (Çул). Ваттисен сăмахĕсем: «Вилме каян пуйса килнĕ, пуйма каян вилсе килнĕ, тет». «Саншăн сурăх та сывă пултăр, кашкăр та тутă пултăр».

Градаци (вăйлатни). Сăмах çаврăнăшĕсене, определенисене пĕрин хыççăн теприне шухăш-туйăма вăйлатнăçем вăйлатса пырас тĕллевпе усă курнине градаци теççĕ.

Сăмахран, Иван Ивник «Ылхан» сăвăра халăх тăшмана епле курайманнине строфасерен вăйлăрах та вăйлăрах палăртать:

Ылхан сана, çич хут ылхан,
Тĕнчен хура вăр-хурахне,
Ăмсаннă имĕш тахçанах
Эс пирĕн халăх пурлăхне.

Ылхан сана, çĕр хут ылхан
Ал тăснăшăн хĕвел çине.
Хăртасшăн пулнă-мĕн, тăшман,
Эс пирĕн халăх телейне.

Ылхан сана, пин хут ылхан
Аркатнăшăн хуласене,
Çак çут тĕнче ниçта, нихçан
Сана ан илтĕр ытамне...

Градаци хăш чухне, анафорăпа пĕрлешсе, витĕмлĕ, сăнарлă синтаксис фигури пулса тăрать. С.Шавли сăввинчен илнĕ сыпăк:

Мĕншĕн, мĕншĕн çĕмĕрт пек куçсем,
Ман çине пăхмастăр эсĕр халь?
Кам çине ӳкетĕр-ши çиçсе,
Кам çине ӳкетĕр, калăр-ха?
Кам куçне савăнтаратăр-ши?
Кам чĕри сикет-ши кăлтлатса?
Кам чунне халь çунтаратăр-ши?
Калăр, тилмĕретĕп йăлăнса.

Инверси (ылмаштарса лартни). Сăмахсен предложенири яланхи йĕркине пăсса, вĕсене урăхларах йĕркеленине инверси теççĕ. Вăл поэзире уйрăмах анлă сарăлнă:

Çĕр илчĕ унăн сăнĕн илемне,
Ăна вăл пачĕ урлăх – киленме.

(Г.Орлов.)

Каймăттăм эпĕ шыв хĕррине –
Юрататăп шывăн сиккине.
Килмĕттĕм эп çак тăван патне –
Юрататăп тăван кăмăлне.

(Халăх юрринчен.)

Союзсăрлăх. Нумайсоюзлăх. Союзсăрлăх – сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене союзсăр пĕрлештерни: *«Микула чупать, васкать, кăшкăрать, пичĕ çинчи тарне шăлса илет»*.

Нумайсоюзлăх – сăмахсене е сăмах çаврăнăшĕсене çине-çинех союзсемпе пĕрлештерсе калани.

Яш та мар, ватах та мар,
Пĕвĕ-сийĕ капмар,
Хулĕ урлă çакнă хăй
Те сурпан, те питшăлли,
Куçĕнче вылять-ха вăй,
Аллинче курка – тулли,
Те туйпăç, те мăнкĕрӳ,
Пычĕ тăчĕ ман пата...

Эллипсис (грекла – сиктерсе хăварни) та союзсăрлăхăн пĕр тĕсĕ. вăл çыруллă литературăра та, халăх сăмахлăхĕнче те чылай тĕл пулать. Эллипсисра пĕр-пĕр сăмаха каламасăр хăвараççĕ, анчах вулакан е итлекен мĕнле сăмах сиксе юлнине çăмăллах пĕлет. Тупмалли юмахсем: «Тĕпĕ – çăка, варри – вăкăр, тăрри – ăвăс» (Тăпачă), «Ăшĕ нимĕр, тулĕ тимĕр» (Çăмарта). Ку тĕслĕхсенче сăмах çаврăнăшне кĕскен («Тĕпĕ çăка евĕр, варри вăкăр евĕр, тăрри ăвăс евĕр» теес вырăнне) пĕлтернĕ. Ваттисен сăмахĕсенче те эллипсис хисеплĕ вырăнта: «Пуçа çитсен – пушмак, теççĕ», «Вут куçне шыв», «Тиркекене – тирĕк тĕпĕ» тата ытти те.

Чăваш поэзийĕнчи тĕслĕхсем:

Пирĕн пурнăç – шавлă океан –
Хумханать, вĕрет, кăпăкланать.

(С.Шавли.)

Кунçул пуçламăш пирĕн –
ирхи шуçăм,
Асран вăл каймĕ, çĕтес çук умран.

(А.Алка.)

Союзсăрлăхпа тата эллипсиспа пăлханчăклă шухăш-туйăма хыпăнса, васкаса каланине палăртнă чухне литературăра анлă усă кураççĕ.

– Юлташсем! Улталарĕç пире...
Юлташсем! Ултав!.. Ултав!..
Юрĕ, юрĕ... Халь тин пуç ан ус...
Фиолетов, Меттакса, Берг...
– Эп лăпках, – тет пĕр çамрăк матрус, –
Сывă пултăр Коммуна. Пер!

(П.Хусанкай.)

Синтаксис фигурисен ытти йышши тĕслĕхĕсене те асăнса хăварар: **эпанафора** (пĕр йĕрке е фраза вĕçĕ тепĕр йĕрке е фраза пуçламăшĕ пулать):

Эс пĕлетĕн: ӳсрĕм эпĕ шухă,
Ӳсрĕм эпĕ шухă ачаран...

(В.Урташ.)

Риторикăлла ыйтусем, чĕнӳсемпе кăшкăрусем. Автор вулакана пĕр-пĕр япала е пулăм пирки ытларах шухăшлаттарас, мĕн те пулин туйтарас тесе, çав япала е пулăм пирки витĕмлĕрех калас тесе риторикăлла ыйтусемпе, чĕнӳсемпе, кăшкăрусемпе усă курать. Акă риторикăллă ыйту:

Чечен ачалăх, шухă çамрăклăх,
Эсир хăçан, хăçан-ши юлтăр?
Хăш айлăмран-ши, хăш çаран
тăрăх
Сăрта çул кăтартса ал султăр?

(А.Алка.)

Риторикăллă чĕнӳ:

Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм!
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳне хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ ывăлна?

(Çеçпĕл Мишши.)

Риторикăллă кăшкăру:

Юншăн – юн! Ирсĕр вилĕмшĕн –
вилĕм!
Вăй-хăват ӳсет, хурçă – тĕрек.
Асра пирĕн çĕршывăмăр пилĕ:
Малалла, тăшмана çĕмĕрер!

(Е.Кольцов.)

Çапла вара, эпир синтаксис фигурисенчен чи анлă сарăлнисене пăхса тухрăмăр. Поэзи синтаксисĕ – сăвă тытăмĕпе кĕввине йĕркелемелли вăйлă меслетсенчен пĕри. Вăл литературăра троп пекех анлă сарăлнă.

Поэтăн тĕллевĕ – тĕрлĕ илемлетмелли мелсемпе, сăнлăхсемпе курнăçланасси мар, вĕсене произведение пĕрин хыççăн теприне чыхсаултарасси мар. Пачах урăхла, поэтăн тĕллевĕ – чун-чĕрере капланса килнĕ шухăш-туйăма чи юрăхлă, вырăнлă кĕвве кĕртесси.

Сăвă чĕлхине пуянлатса пырасси

Поэт хăйĕн чĕлхине яланах пуянлатса пыма тивĕç. Унăн халăх калаçăвĕн уйрăмлăхĕсене çывăххăн туйса тăмалла, халăх сăмахлăхне тĕпчесе вĕренмелле. Пэта пултаруллăх ĕçĕнче çавăн пекех тĕрлĕ словарьсем нумай пулăшаççĕ. Писатель-художникăн питĕ пуян словарьти сăмахсене лайăх пĕлмелле тата унтан чи тĕрĕс, уçăмлă, вăйлă сăмахсене суйласа илмелле.

Халăх чĕлхинче пурте усă куракан сăмахсем те, неологизмсем те, архаизмсем те, историзмсем те, вырăнти калаçу сăмахĕсем те, тĕрлĕ наука терминĕсем те пур. Вĕсене поэт е прозаик хăйĕн стильне, произведенире сăнласа кăтартакан вăхăта, çынсене, вырăна кура виçеллĕ суйласа илет, вĕсемпе усă курса, калас шухăша вăйлатать, кирлĕ ӳкерчĕксем, сăнарсем тăвать.

(Малалли пулать).

Тав тăватăп

Пĕрремĕш ман вĕрентекен,
Тухмастăн эсĕ чĕререн.
Ман куçăм умĕнчех ялан,
Манас та çук сана нихçан.

Хăвăн таса чун ăшшине
Парнелетĕн ачасене.
Çап-çутă пурнăç илемне
Курма вĕрентрĕн кашнине.

Тавах сана, вĕрентекен –
Пире ăс-хакăл пиллекен.
Телейлĕ пул, хăвна упра,
Эс иккĕмĕш анне – чунра.

Тăван çĕршыв хакне пĕлме,
Тавралăхпа чăн киленме,
Чунтан савма хамăр çĕре
Вĕрентрĕн пĕчĕкрен пире.

Манас çук сана нихăçан,
Эс тухмăн манăн асăмран.
Тав тăватăп эп чĕререн,
Мухтав сана, вĕрентекен!

Уявпа саламласа

Уявпа саламласа
Эпĕ сăвă çырас терĕм.
Яланах эс асăмра,
Ман тăван вĕрентекенĕм.

Пур кăмăлтан тăрăшса
Ачасене вĕрентен,
Чĕрӳ санăн тап-таса,
Ырă тăван кунсерен.

Кашни кунах ывăнса
Пур пĕрех-çке ăс паратăн.

Эс пурришĕн тав сана,
Ĕмĕрлĕхе тусăм манăн.

Мĕн тери хăюллă эс,
Паттăр тата чăтăмлă,
Юратать кашни ентеш –
Ялан ырă кăмăллă.

Чечек пек илемлĕ пул,
Юратсам тăван шкула,
Эсĕ хĕвел евĕр кул.
Манмăп нихăçан сана.

Тепĕр хут калатăп, тав
Çын пулма вĕрентнĕшĕн!
Эсĕ ан хурла ытла
Хăш чух кӳрентернĕшĕн.

Çакă уяв ячĕпе
Çыртăм ăшă сăмахсем.
Сана хитре чечекпе
Савăнтарччăр ачасем.

Ксения РОДИОНОВА.
Шупашкар районĕ,
Чăрăшкасси шкулĕ.

Ылтăн кĕр килет пĕрре

Çитрĕ ылтăн кĕркунне,
Илем кĕртрĕ тĕнчене.
Тултарать нӳхрепсене
Хĕл каçмалăх пурлăхне.

Кăмăл савăк кĕркунне,
Юрататăп илемне.
Вăл çĕклет çын кăмăлне,
Ĕмĕтне те туйăмне.

Сарă, хĕрлĕ те кĕрен –
Ку илемĕ кĕркуннен.
Юрламаççĕ кайăксем,
Тунсăхлаççĕ йывăçсем.

Хитре ылтăн кĕркунне,
Илĕртет хăй ытамне.
Парнелет вăл пурлăхне –
Мăйрине те кăмпине…

Хĕвел хĕртет тӳперен,
Йăл-йăл кулать ирсерен.
Ылтăн кĕр килет пĕрре,
Ытарма çук вăл хитре.

Николай АГАКОВ.
Канаш районĕ,
Шуркасси.

◎ ***Кристина ВАСИЛЬЕВА*** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) **ӳкерчĕкĕсем.**

Лайăх сăмах шерпет тути.

Сан умăнта числоворд, Хăйне евĕрлĕ сканворд



2839	68245	218075	495610	821262	4532078
~~2855~~	70348	282346	566872	837608	5452853
5378	81552	386659	589853	882420	5761769
7253	86365	391168	664348	915839	7113437
29312	86911	414444	676468	928497	7457840
36435	89488	424488	696274	988643	8001724
50013	95914	433808	767999	1033849	9128355
59262	147195	436177	810987	2188953	9746476
59780	149285			4493951	9856534

Сăмахкаçмăш



Сылтăмалла: 5. Çурăм хыçĕнчи хутаç. 6. Ăна пионер пăнтăртаттарнă. 8. Чăваш апачĕ. 10. Амăшĕ çине вĕрекен йытă çури. 14. «Хĕрлĕ автан». 15. Кăнтăрти йывăç. 16. Пушкин юмахĕнчи патша. 17. Çĕр кăпкалатмалли хатĕр. 21. Хваттерти хурт-кăпшанкă. 22. Унта тырă авăртаççĕ. 23. Вĕçенкайăк. 26. Республикăри район. 27. Тулă-ыраш виçмелли хатĕр. 28. Пĕр евĕрлĕ виçе.

Аялалла: 1. Çыпçăнма юратакан ўсен-тăран. 2. Апат пĕçернĕ çĕрте усă куракан шĕвек. 3. Авалхи çĕр виçи. 4. Тĕнчери чи пысăк стадион. 7. Пулас генерал. 9. Р.Сарпи çырнă кĕнеке. 10. Каппайчăк. 12. Пушă. 13. Тĕвесен ушкăнĕ. 18. Вăрман. 19. Чўречe пайĕ. 20. Унта канма е сипленме каяççĕ. 24. Савăт-сапа. 25. Вĕçсĕр-хĕрсĕр шыв лаптăкĕ.

Пуçватмăш

Ăнлантарни: Çак пуçватмăш хуравĕсем хура йĕрпе палăртнă вырăнтан пуçланаççĕ е вĕçленеççĕ.



Сылтăмалла. 1. Вăтам Азири авалхи хула. 5. Вырăс халăх артисчĕ. 6. Чăваш çыравçи. 8. Хурма сорчĕ. 10. Тапăну. 13. Ăна чиркў çынни тăхăнать. 14. Наркăмăшлă çĕлен. 16. Кĕрхи чечек. 17. Китайран илсе килнĕ пустав. 19. Чехов та, Шипулин та. 21. Пĕр-пĕр япалана ўкерсе ăнлантарса пани. 22. Пушхир кушакĕ. 23. Пуçа тăхăнмалли хатĕр. 24. Юмор пиччĕшĕ. 25. Ыйту-хурав евĕрлĕ ăмăрту.

Аялалла: 1. Чăваш поэтесси. 2. Ун тăрăх юн чупать. 3. Çав юханшыв çумĕнче Ылтăн урта çарне çапса çĕмĕрнĕ. 4. Пĕр-пĕр механизм пайĕ. 5. Каппайчăк. 7. Вырăс халăх артистки. 8. Раççей шахматисчĕ, тĕнче чемпионĕ пулнăскер. 9. К.Марксăн «пуянлăхĕ». 10. Кавказри юханшыв. 11. Клоунсен дебючĕ. 12. Йог йышăнса ларакан меслет. 15. Раççей боксерĕ, тĕнче чемпионĕ пулнăскер. 18. Тĕпсĕр тарăн çырма. 19. Пермь хулинчи футбол команди. 20. Арисем юрлакан хайлав.

Таната пек пĕр саспалли, Пире туртать-çке ун алли



1. Тўпере вĕçекен «тимĕр кайăк». 2. Ток пусăмне шайлаштаракан. 3. Вăл çар училищинче вĕренет. 4. Ăсчахăн ĕçĕ. 5. Çар техники. 6. Пушă. 7. Чăваш юрăçи. 8. Чăваш сăвăçи. 9. Карттăсем чикмелли хатĕр. 10. Кĕпер пайĕ. 11. Ят-шыв палли.

Николай КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***